Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне

# Пĕчĕк бизнесăн пĕлтерĕшĕ пысăк

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Ĕçлекене паян патшалăх та пулăшать. Мĕнле çăмăллăхсемпе усă кураççĕ паян пĕчĕк бизнес представителĕсем?**

– Пĕчĕк формăллă хуçалăхсем паян çĕр лаптăкĕсене саклата хывса кредитсем илме пултараççĕ. Патшалăх пулăшăвне аккредитаци комиссийĕ витĕр тухнă бизнес-проектсене кура параççĕ. Комисси хăш проекта суйласа илесси вара çак критерисемпе çыхăннă: предприятин ĕçĕ-хĕлĕнче коммерци палли пурри, харпăрлăх хуçисене е бюджет тулашĕнчи укçа-тенке хăй ĕçне явăçтарма, потребительсен рынокĕнче конкуренци туса хума пултарать-и вăл, предприятин социаллă пĕлтерĕшĕ пур-и, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем тупса пама пултарать-и çынсене тата ытти те. Районти 18 ял хуçалăх потребительсен кооперативĕсенчен 7-шĕ аккредитаци витĕр тухнă.

Килти хушма хуçалăхсене те паян патшалăх пулăшать. 10 уйăхра 798 хушма хуçалăх хуçине 120 миллион тенкĕлĕх çăмăллатнă кредит панă.

**– Пĕчĕк бизнес представителĕсене район администраци шайĕнчен мĕнле пулăшу паратăр?**

– Кирек епле ĕçре те квалификаци шайне хăпартса пыни кирлĕ. Пĕчĕк бизнесра та çавăн пекех. Районта информаципе консультаци паракан пункт пур. Вăл бизнес представителĕсене тĕрлĕрен нормативлă право тĕлĕшĕнчи актсене йĕркелеме пулăшать. Çавăн пекех хуçалăхсен пĕчĕк формисене пулăшма тата аталантарма координаци канашне йĕркеленĕ. Кăçал унăн 3 ларăвне ирттернĕ, бизнес технологийĕн шкулĕ тата тĕрĕслекен ытти органсем хутшăннипе 4 семинар-канашлу ирттернĕ. Çулсеренех пĕчĕк предпринимательсен кунне ирттеретпĕр.

Пĕчĕк предпринимательствăна аталантарассипе тĕрлĕ майсем пурнăçа кĕреççĕ. Вĕсенчен пĕри – илнĕ кредитсен процент ставкисене субсидилесси. Конкурса хутшăнма пĕтĕмпе 12 проект ярса панă пулсан, вĕсенчен 9-шне процент ставкисене саплаштарма республика бюджетĕнчен укçа уйăрса параççĕ.

Продукци тăратассипе тата пулăшу парассипе муниципаллă заказсене пурнăçлани те пĕчĕк бизнеса пулăшма йĕркелени пулать. Çавăнпа та ятарлă программăпа килĕшӳллĕн муниципаллă ыйтусемпе пĕчĕк предприятисенчен 15 процентран кая мар продукци кăларма, пулăшусем пама заказ илмелле. 10 уйăхра вара муниципаллă ыйтусемпе пĕчĕк бизнес представителĕсем 31373,7 пин тенкĕлĕх ĕç тунă. Ку вăл туяннă пĕтĕм продукцин, ĕçĕн е пулăшун 31 процентне пулать.

**– Пĕчĕк бизнес представителĕсем хăйсем ĕçне чăннипех юратнине тĕрлĕ конкурссене хутшăнса, вĕсенче çĕнтерсе те çирĕплетсе параççĕ. Ку енĕпе мĕн палăртма пултаратăр?**

– Чăннипех те, пĕчĕк бизнес представителĕсем район, республика çеç мар, Раççей шайĕнчи конкурссене те хаваспах хутшăнаççĕ. Кăçал акă поварсемпе кондитерсен конкурсĕнче “Мăнкун тĕлĕнтермĕшĕ – 2007” конкурсра “Сундырь-Хлеб” чикĕллĕ яваплăхлă общество “Ачашăн чи илĕртӳллĕ Мăнкун парни” номинаци çĕнтерӳçи пулса тăчĕ. Республикăри “Çулталăкри чи пултаруллă директор” конкурсра “Визит” чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕ Л.В. Николаева “Шанчăклă партнер” номинацинче çĕнтерчĕ. Вăл Пĕтĕм Раççейри 4-мĕш конкурса хутшăнса, “Çулталăкри чи пултаруллă çамрăк директор” номинаци çĕнтерӳçи пулса тăчĕ, Раççейри хĕрарăм-предпринимательсен Ассоциацийĕн медальне тивĕçрĕ. Çулсеренех 5-7 предприниматель республикăри “Çулталăкри чи лайăх предприниматель” конкурса хутшăнать. Нискасси шкулĕнче ачасене теттесем çĕлеме вĕрентекен М.Н. Пушкарева 2 вырăн йышăнчĕ.

**– Эльвира Иосифовна, малашнехи тĕллевсем, задачăсем. Мĕнлисем вĕсем?**

– Чи малтанах пирĕн уйрăм хушма хуçалăхсене аталантарма çăмăллатнă кредитсем ытларах памалла. Хальлĕхе ăна пĕтĕм хушма хуçалăхăн 12,4 процентĕ чухлĕ илнĕ. Ку йыша 20 процента çитермелле. Çавăн пекех ял хуçалăх производство кооперативĕсене йĕркелессипе ĕçлемелле. Кашни ял тăрăхĕнчех пулччăр вĕсем. Хальлĕхе вара 6 ял тăрăхĕнче – Мăн Сĕнтĕр, Турай, Йӳçкасси, Чуманкасси, Ярапайкасси, Оринин ял тăрăхĕсенче вĕсене йĕркелемен-ха. Çав хушăрах Москакасси, Катькас, Юнкă ял тăрăхĕсенче ял хуçалăх кооперативĕсене икшер йĕркеленĕ. Производство, халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе енĕпе, килти хушма хуçалăхсенче туса илнĕ продукцие вырнаçтарассипе ĕçлекеннисем ытларах кирлĕ. Урăхла каласан, вырăнти халăх ыйтăвне тивĕçтерме пултарччăр вĕсем. Малашне те пирĕн пĕчĕк хуçалăх формисене аталантарассипе тата та тăрăшарах ĕçлемелле.

**– Тавах, калаçушăн, Эльвира Иосифовна.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Райадминистрацире

## Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн ноябрĕн 15-мĕшĕнчи 524 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Ял хуçалăх производствинче нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

**Людмила Вениаминовна БЕЛЬСКАЯНА**, “Свобода” хуçалăх бухгалтерне;

**Маргарита Варсонофьевна ИШАКОВАНА**, “Свобода” хуçалăхри склад заведующине;

**Алевтина Васильевна ПЕТРОВАНА**, “Лидер” Агрофирма” бухгалтерне.

Çамрăк ăрăва пĕлӳ тата воспитани парас ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн:

**Николай Иванович ПЕТРОВА**, Шетмĕпуç шкулĕн математика тата физика учительне;

**Валерий Варсонофьевич ФЕДОРОВА**, Тивĕш шкулĕн истори учительне.

Строительствăра нумай çул тата ăнăçлă ĕçленĕшĕн **Людмила Егоровна ХОШКИНАНА,** “Моргаушская” МСО каменщикне.

11 уйăх пĕтĕмлетĕвĕ

## Çĕнĕ кайăксем ытларах вĕçсе килчĕç

Муркаш районĕнчи демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва илес пулсан, вăл çапларах. 2006 çулхи 11 уйăхра çут тĕнчене 338 кайăк вĕçсе килме ĕлкĕрнĕччĕ, кăçал вара çак кăтарту 397 ачапа танлашма ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ. 2007 çул арçын ача çулĕ тейĕн, вĕсем 216-ăн çуралма ĕлкĕрчĕç, хĕр ачасем вара 181-ĕн. Уйрăмах пысăк ӳсĕм Муркаш (70), Мăн Сĕнтĕр (37), Оринино (32), Москакасси (30) ял тăрăхĕсенче палăрчĕ. Чи анлă сарăлнă ятсем Даниил (18), Кирилл (16), Александр (14), Анастасия (15), Анна (13), Виктория (10) пулчĕç. Çав вăхăтрах малтан пирĕн хушăра ытлах сарăлман ятсем те хутшăнчĕç: Услада, Альфия, Давид, Глеб.

2006 çулхи çак тапхăрта 198 мăшăр çĕнĕ çемье çавăрнă пулсан, кăçал вара 221 мăшăр алла-алăн тытăнса утма тĕв турĕ. Çакăнпа пĕрлех, шел пулин те, мăшăрсем уйрăласси те ӳсрĕ. Вĕсем 63 (58) çемьепе танлашрĕç.

Пурнăç хăй еккипех пырать, пирĕнтен яланлăхах уйрăлакансем те сахаллăнах мар. Ун йышшисем 637 (621) çынна çитрĕç. Вăл шутра арçынсем 310-ăн, вăтамран 58 çултисем. Хĕрарăмсем 327-ĕн, вăтамран 74 çултисем. Хальлĕхе çакăн пек лару-тăру Муркаш районĕнче, çапах та пурнăçра ыррине ытларах кĕтес килет.

**ЗАГС уйрăмĕ.**

Официально

**Выборы депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации пятого созыва 02 декабря 2007 года**

**ПРОТОКОЛ**
**территориальной избирательной комиссии об итогах голосования на территории Моргаушского района Чувашской Республики**

Число участковых избирательных комиссий на соответствующей территории 51

Число поступивших протоколов участковых избирательных комиссий об итогах голосования, на основании которых составлен протокол территориальной избирательной комиссии об итогах голосования 51

Число избирательных участков, итоги голосования по которым были признаны недействительными 0

Суммарное число избирателей, включенных в списки избирателей на момент окончания голосования на избирательных участках, итоги голосования по которым были признаны недействительными 0

После предварительной проверки правильности составления протоколов участковых избирательных комиссий об итогах голосования территориальная избирательная комиссия путем суммирования данных, содержащихся в указанных протоколах участковых избирательных комиссий, **у с т а н о в и л а**:

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Число избирателей, внесенных в списки избирателей на момент окончания голосования | 0 | 2 | 5 | 5 | 8 | 3 |
| 2 | Число избирательных бюллетеней, полученных участковыми избирательными комиссиями | 0 | 2 | 6 | 3 | 0 | 5 |
| 3 | Число избирательных бюллетеней, выданных избирателям, проголосовавшим досрочно | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| 4 | Число избирательных бюллетеней, выданных участковыми избирательными комиссиями избирателям в помещениях для голосования в день голосования | 0 | 1 | 7 | 5 | 0 | 9 |
| 5 | Число избирательных бюллетеней, выданных избирателям, проголосовавшим вне помещений для голосования в день голосования | 0 | 0 | 3 | 4 | 8 | 6 |
| 6 | Число погашенных избирательных бюллетеней | 0 | 0 | 5 | 3 | 1 | 0 |
| 7 | Число избирательных бюллетеней, содержащихся в переносных ящиках для голосования | 0 | 0 | 3 | 4 | 8 | 6 |
| 8 | Число избирательных бюллетеней, содержащихся в стационарных ящиках для голосования | 0 | 1 | 7 | 5 | 0 | 8 |
| 9 | Число недействительных избирательных бюллетеней | 0 | 0 | 0 | 2 | 9 | 3 |
| 10 | Число действительных избирательных бюллетеней | 0 | 2 | 0 | 7 | 0 | 1 |
| 11 | Число открепительных удостоверений, полученных участковыми избирательными комиссиями | 0 | 0 | 1 | 4 | 0 | 4 |
| 12 | Число открепительных удостоверений, выданных участковыми избирательными комиссиями избирателям на избирательных участках до дня голосования | 0 | 0 | 1 | 4 | 0 | 4 |
| 13 | Число избирателей, проголосовавших по открепительным удостоверениям на избирательных участках | 0 | 0 | 0 | 5 | 0 | 3 |
| 14 | Число погашенных неиспользованных открепительных удостоверений | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| 15 | Число открепительных удостоверений, выданных избирателям территориальной избирательной комиссией | 0 | 0 | 0 | 6 | 8 | 9 |
| 16 | Число утраченных избирательных бюллетеней | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| 17 | Число избирательных бюллетеней, не учтенных при получении | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| Наименования политических партий, зарегистрировавших федеральные списки кандидатов | | Число голосов избирателей, поданных за каждый федеральный список кандидатов | | | | | |
| 18 | 1.Политическая партия «Аграрная партия России» | 0 | 0 | 0 | 3 | 8 | 7 |
| 19 | 2.Всероссийская политическая партия «Гражданская Сила» | 0 | 0 | 0 | 0 | 5 | 3 |
| 20 | 3.Политическая партия «Демократическая партия России» | 0 | 0 | 0 | 0 | 3 | 5 |
| 21 | 4.Политическая партия «Коммунистическая партия Российской Федерации» | 0 | 0 | 2 | 1 | 1 | 7 |
| 22 | 5.Политическая партия «СОЮЗ ПРАВЫХ СИЛ» | 0 | 0 | 0 | 0 | 5 | 9 |
| 23 | 6.Политическая партия «Партия социальной справедливости» | 0 | 0 | 0 | 0 | 3 | 0 |
| 24 | 7.Политическая партия «Либерально-демократическая партия России» | 0 | 0 | 1 | 6 | 9 | 0 |
| 25 | 8.Политическая партия «СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ: РОДИНА/ПЕНСИОНЕРЫ/ЖИЗНЬ» | 0 | 0 | 1 | 5 | 2 | 9 |
| 26 | 9.Политическая партия «ПАТРИОТЫ РОССИИ» | 0 | 0 | 0 | 2 | 1 | 4 |
| 27 | 10.Всероссийская политическая партия «ЕДИНАЯ РОССИЯ» | 0 | 1 | 4 | 5 | 1 | 8 |
| 28 | 11.Политическая партия «Российская объединенная демократическая партия «ЯБЛОКО» | 0 | 0 | 0 | 0 | 6 | 9 |

**Председатель территориальной избирательной комиссии АНДРЕЕВ А.В.**
**Секретарь комиссии СОРОКИНА В.К.**

**Чувашская Республика**
**Глава администрации Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**

**23.11.2007 г. № 542**

**с. Моргауши**

**Об установлении тарифов на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям муниципальным унитарным предприятием жилищно-коммунального хозяйства “Моргаушское” Моргаушского района**

В соответствии с Жилищным Кодексом Российской Федерации, Федеральными законами №210-ФЗ от 30.12.2004г. “Об основах регулирования тарифов организаций коммунального комплекса”, 131-ФЗ от 06.10.2003 г. “ Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации”, постановлением Правительства Российской Федерации от 23.05.2006 г. №307 “О порядке предоставления коммунальных услуг гражданам” и с протоколом заседания комиссии для проведения экспертизы изменения тарифов на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям МУП ЖКХ “Моргаушское”, платы за ремонт и содержание жилого помещения ( в т.ч. вывоз и утилизация твердых бытовых отходов) для населения Моргаушского района на 2008 год от 09 ноября 2007 года, решениями Моргаушского районного Собрания депутатов от 31 октября 2006 г. № С-13/8 и от 31 октября 2006 г. №С-13/9 п о с т а н о в л я ю :

1. Установить тарифы на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям муниципальным унитарным предприятием жилищно-коммунального хозяйства “Моргаушское” в следующих размерах:

- водоснабжение – 6 руб. 77 коп. за 1 куб.м (без дополнительного предъявления НДС);
- водоотведение - 12 руб. 84 коп. за 1 куб.м ( без дополнительного предъявления НДС).

2. Изменение тарифов по оплате жилищно-коммунальных услуг в сторону увеличения осуществлять с одновременным применением мер социальной защиты граждан в виде предоставления им субсидий на оплату жилья и коммунальных услуг.

3. Признать утратившим силу Постановление Главы администрации Моргаушского района от 28.11.2006 г. №565 “Об установлении тарифов на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям организациями, осуществляющими регулируемый вид деятельности в водопроводно-канализационном хозяйстве Моргаушского района”.

4. Постановление вступает в силу с 1 января 2008 года.

5. Настоящее постановление опубликовать в районной газете “Знамя победы”.

**Глава администрации Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.**

Мĕнле пурăнатăн, культура ĕçченĕ?

## Кашнин кăмăлне тивĕçтеретпĕр

Юлашки çулсенче пурнăç нумай улшăнчĕ, çĕнелчĕ. Çакă паян кашни утăмрах сисĕнет.

Илер-ха, акă, библиотекăсене. Муркашри тĕп библиотекăна 7-8 çул каяллахипе ниепле те танлаштарма май çук.

ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн “Ялсенче тĕслĕх библиотекăсем уçасси çинчен” Указне пурнăçласа, районта юлашки çулсенче 30 тĕслĕх библиотека уçнă. Çав шута Муркашри тĕп библиотека та кĕрет. Çакă вара библиотекăна пыракан кашни çын ыйтăвне туллин тивĕçтерме май парать. Мĕншĕн тесен библиотека паян информаципе культура центрĕ пулса тăрать. Хальхи техника хатĕрĕсемпе: компьютерсемпе, аудио-, видеотехникăпа туллин усă курни, Интернета тухни пĕлӳ çăл куçне ӳстерет, çавна пулах библиотекăна çӳрекенсен йышĕ те чылай хутшăнчĕ.

Çулсеренех кĕнеке фончĕ те ӳссе пырать. Вăл кĕнеке анчах мар, тĕрлĕ видеокассетăсемпе те пуянланать. Хаçат-журнал çырăнассине май килнĕ таран ӳстерсех пыратпăр. Иртнĕ çулта 38 экземпляр тĕрлĕ хаçат-журнал пулнă пулсан, кăçалхи иккĕмĕш çур çуллăха район администрацийĕ пулăшнипе 50 экземпляра çитнĕ. Çулсеренех библиотекăсен кунĕ тĕлне “Сана манăн библиотека” акци ирттеретпĕр. Çак акци вăхăтĕнче пирĕн библиотека чылай кĕнекепе пуянланчĕ. Раççей журналисчĕсен союзĕн членне А.А. Чернована тата Н.Б. Борисова уйрăммăнах тав сăмахĕ калас килет.

Пирĕн библиотекăра тĕрлĕ ыйтусем çине тулли хурав илме право системин базисем “Консультант плюс”, “Законодательство России”, “Муркаш районĕнчи право акчĕсен банкĕ”, “Пирĕн ачасен прависем” кодексĕ тата тĕрлĕ юридици ыйтăвĕсемпе тивĕçтерекен çĕнĕ кĕнекесем пур.

Çавăн пекех библиотекăра тăван тăрăхри паллă çынсен: чăвашсен пĕрремĕш ученăйĕн, профессорĕн, этнографĕн, историкĕн Н.В. Никольскин, общество деятелĕн, куçаруçăн А. Петтокин, Ю. Скворцов писателĕн электронлă базисем пур. Кунта вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен нумай пĕлме пулать. Унсăр пуçне библиотекăна çӳрекенсем валли тăван ен, унăн çыннисем çинчен пĕлме “Муркаш районĕн паллă кунĕсем”, “Муркаш енĕ”, “Страницы славы” электронлă база кăтартăвĕсем пур. Ку базăсем çулсеренех çĕнĕ материалсемпе пуянланса пыраççĕ.

Библиотека вĕренӳре тĕрлĕ предметсемпе чылай хушма пĕлӳ илме электронлă кăларăмсен коллекцийĕпе пуян. Вĕсемпе усă курса ачасем чылай пĕлӳ илеççĕ. Шкул пĕтерекенсем валли Чăваш Республикинчи мĕн пур вĕренӳ заведенийĕсем пирки “Чăваш енĕн аслă шкулĕсем” электронлă база урлă кирек хăçан та оперативлă информаци илме пулать. Библиотекăра çук документсене электронлă майпа Наци библиотекинчен илме май пур.

Библиотекăна вулакансене ытларах явăçтарас тесе эпир тĕрлĕрен мероприятисем ирттеретпĕр. “Çамрăк çемье”, “Ыр кăмăллăх” клубĕсем хăйсен пĕлтерĕшне туллин тивĕçтереççĕ. Тин çеç пурнăç çулĕ çине тухакан, çемье çавăракан çамрăксене вĕсем çав тери кирлĕ. Унсăр пуçне кĕнекене юратма, тĕрлĕ литературăпа кăсăклантарма хăнăхтарас тесе эпир “Уçă алăксен кунĕсене”, тĕрлĕрен темăсемпе литература программисене хатĕрлесе ирттеретпĕр. Вĕсем яланах активлă тата интереслĕ лару-тăрура иртеççĕ. “Очарование” литературăпа музыка салонĕ те тĕрлĕ писательсен ĕçĕ-хĕлĕпе туллин паллаштарать.

“Кĕнеке çулталăкне” халалласа “Çамрăк çемье” клуб членĕсемпе “Чтение до рождения” темăпа Муркашри тĕп больницăн врачĕсене чĕнсех питĕ пысăк тавра курăмлă кану каçĕ иртрĕ. Ватă çынсен кунĕ тĕлне ятарласа “Сирĕн пурнăç яланах ырă та ăшă пултăр” литературăпа музыка каçне ирттерме хатĕрлентĕмĕр.

Сăмахăма пĕтĕмлетсе çапла калас килет. Библиотека алăкĕсем яланах сирĕншĕн уçă. Сире мĕнле ыйту канăç памасть, унăн хуравĕсене те тупма пултаратăр билиотекăра. Килĕр, хапăл тусах кĕтетпĕр сире.

**Т. ПАВЛОВА, Муркашри тĕп библиотека директорĕ.**